Сентябрĕн 27-мĕшĕнче – Воспитательсен тата шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче ĕçлекенсен кунĕ

Чĕре тата чун ăшшине парнелеççĕ

Ачасен шкул çулне çитичченхи вĕренĕвĕ – пĕрремĕш тата питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пусăм. 2007 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсем 30 пулнă. Вăл шутран ача сачĕсем 12, пуçламăш шкул-садсем 6 тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 12 шкулта шкул çулне çитмен ачасен 13 ушкăнĕ вырнаçнă. Шкул çулне çитмен ачасен вĕрентӳ учрежденийĕсем пурте муниципаллă харпăрлăх шутланаççĕ.

Районта ачасен шучĕ чакса пырать. Апла пулин те шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене çӳрекенсен шучĕ ӳссе пынине палăртма кăмăллă.

Хальхи вăхăтра шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене ачасен 69,8 проценчĕ çӳрет. Шкул çулне çитмен аслă çулхи ачасем хушшинче ку кăтарту районти яллă районсем хушшинче чи лайăххи – 92,3 процент.

Муркашра ачасене «Солнышко» ача садне вырнаçтарассипе ыйтусем тухса тăчĕç. Ку ача садне çĕнĕрен комплектланă. Ача сачĕ вырнаçнă микрорайонта ачасем йышлă, вăл ачасен ашшĕ-амăшĕсен пур ыйтăвĕсене те тивĕçтереймест.

Ачасем шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене çӳрессин шайĕ пур ял тăрăхĕсенче те пĕр пек мар. Акă Мăн Хураçка ял тăрăхĕнче ачасен 100 проценчĕпех, Муркаш ял тăрăхĕнче – 93 проценчĕ, Москакасси ял тăрăхĕнче – 76,8 проценчĕ шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене çӳрет пулсан, Ильинкăра ку кăтарту 38,5 процентпа, Шетмĕпуçĕнче 33,3 процентпа, Шашкарта 45,1 процентпа кăна танлашать.

Районта 1271 ача тĕрлĕ режимпа ĕçлекен шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденине çӳрет. Вăл шутран кунне 6 сехет ĕçлекеннисене – 120 ача, 9 сехет ĕçлекеннисене – 127 ача, 10,5 сехет ĕçлекеннисене – 534 ача, 12 сехет ĕçлекеннисене – 435 ача тата талăкĕпех ĕçлекеннисене – 55 ача.

Ачасем кĕске вăхăт çӳрекен ушкăнсемпе усă кураканcем те çук мар. Вĕсене районта 9 йĕркеленĕ. Кун пек чухне ачасене ача садне çӳретнĕшĕн ашшĕ-амăшĕнчен укçа илессине те тĕрлĕрен пăхса хунă.

Юлашки çулсенче шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче педагогика кадрĕсен ăсталăх шайĕ палăрмаллах лайăхланчĕ. Нумайăшĕ пирĕн республикăра аслă вĕренӳ заведенийĕсенче заочно майпа вĕренет.

«Путене» ача садĕнче интеллектуаллă вăйă вăхăтĕнче.

Педагогсем ача сачĕсене çӳрекенсене кунта хăтлă, хаваслă, интереслĕ пултăр тесе сахал мар тăрăшаççĕ. Ачасен шкул çулне çитичченхи ӳсĕм çулĕсем уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ те ответлă тапхăр пулса тăраççĕ. Çак вăхăтра ĕнтĕ çынннăн пахалăх енĕсем, çывлăх никĕсĕ çирĕпленеççĕ. Ăнăçлă ачалăхпа хыççăнхи шăпа шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕнчи педагогсен ăс-тăнĕпе, вĕсен тӳсĕмлĕхĕпе, тимлĕхĕпе, кашни ачан шалти туйăмне ăнланма пĕлнипе тӳрремĕнех çыхăннă. Хăйсен воспитателĕсем пулăшнипе ачасем хамăр тавралăхăн вăрттăнлăхĕсене уяма хăнăхаççĕ, Тăван çĕршыва юратма тата сыхлама вĕренеççĕ.

Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче вăй хуракансем хушшинче пултаруллă та хастар воспитательсем, чăннипех ырă ята тивĕçнисем сахал мар. Уйăрăмах вара вĕсенчен О.Г. Петрована, О.В. Прокопьевана (Муркаш, «Солнышко»), Е.В. Миловидована (Москакасси, «Колокольчик»), А.А. Яковлевана, В.И. Петуховано (Мăн Сĕнтĕр, «Мечта»), Р.П. Андреевана, С.Н. Ивановано (Муркаш, «Путене»), В.Н. Угарована (Катькас, «Çăлкуç»), Е.В. Максимована (Сосновка шкулĕнчи «Хунав» кĕске вăхăтлăх ушкăн), Т.П. Григорьевана (Турай шкулĕнчи «Ласточка» кĕске вăхăтлăх ушкăн) т. ыт. те асăнмалла.

Нумай воспитательсем районти тата республикăри конкурссене активлă хутшăнаçĕ. Сăмахран, 2007 çулхи апрель уйăхĕнче районти «Çулталăк воспитателĕ» конкурсра О.В. Прокопьева çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ. Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен чи лайăх воспитателĕ пулса тăнă май, кăçал вăл республикăри педагогика ĕçченĕсем хушшинче çĕнтерсе Чăваш Республикин Президенчĕн грантне тивĕç пулчĕ.

Ачасен пултарулăхне аталантарассипе тĕрлĕрен конкурссем, ăмăртусем, интеллектуаллă вăйăсем, викторинăсем ирттересси йăлана кĕнĕ. Ачасен ӳкерчĕкĕсен конкурсĕсене «Путене», «Мечта», «Золушка», «Хĕвел», «Радуга», «Солнышко» ача сачĕсен воспитанникĕсем активлă хутшăнаççĕ. «Малышиада» вăйă-ăмăртусенче час-часах «Солнышко», «Малыш», «Путене» ача сачĕсене çӳрекенсем çĕнтерӳçĕсем пулса тăраççĕ. 2007 çулхи март уйăхĕнче «Солнышко», «Путене», «Золушка», «Колокольчик», «Улыбка», «Малыш», «Мечта», «Рябинушка», «Çăлкуç» воспитанникĕсем районти интеллектуаллă вăйăсене хастар хушăнчĕç.

Ачасене тăван тавралăхпа, унăн историйĕпе, культурипе, аваллăх йăли-йĕркипе паллашăнтăлăвне аталантарас тĕллевпе пĕлӳ игротекине уçнă. Кунта вĕсем хăйсемшĕн интереслине сахал мар пĕлеççĕ, çут çанталăкпа, тавралăхпа паллашаççĕ, ансат тĕрĕслевсемпе опытсем ирттереççĕ, хăйсен пĕлӳ шайне пуянлатаççĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче те шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче уçă алăксен кунĕсене ирттернĕ. Ун чухне ашшĕ-амăшĕсем учрежденисен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă, занятисемпе ытти мероприятисене хутшăннă.

Иртнĕ кĕркунне районти шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсем «Тухăç – 2006» уява хутшăнчĕç. «Путене» ача сачĕ 1-мĕш вырăна тухма пултарчĕ. 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсене «Мечта» тата «Колокольчик» йышăнчĕç. Çулленех «Малыш» тата «Солнышко» ача сачĕсем асăннă уявра фитобар

Чуманкассинчи «Малыш» ача садĕнче хăтлă та илемлĕ.

тарасси пирки те манмаççĕ шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче. Вĕсенчи методика кабинечĕсенче наци культурин пайĕсене, «Березка», «Улыбка», «Путене», «Солнышко», «Çăлкуç», «Тюльпан» ача сачĕсенче краеведени музейĕсене йĕркеленĕ. Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенчен чылайăшĕнче хăйсен тавралăхĕ, вырăнсенчи ĕçчен тата паллă çынсем пирки альбомсем пур.

«Тюльпан» ача сачĕ «Туслăх çăл куçĕ» педагогика технологийĕпе ĕçлесе пырать. Çапла майпа ачасен хăйсен наци ăнланулăхĕн, ытти наци çынннисемпе килĕштерсе пурăнассин туйăмĕ аталанса çирĕпленет. Ачасем чăвашсен тата çармăссен культурипе, йăли-йĕркипе, паллă вырăнĕсемпе паллашаççĕ, ансат блюдăсем хатĕрлеме хăнăхаççĕ, ал ĕçне вĕренеççĕ.

«Путене» ача сачĕ «Тăван ен, юратнă ен» педагогика технологийĕ валли материалсем пухассипе ĕçлет. Ачасем çулсерен вырăнти паллă çынсемпе, ваттисемпе тĕл пулаççĕ, тăван тавралăха хӳтĕлеме вĕренеççĕ. Кăçал вĕсем М.М. Димитриев художникпа тĕл пулчĕç, тăван тавралăх илемне хут çине ӳкерме май пуррине те курса ĕненчĕç.

«Колокольчик», «Василек», «Улыбка», «Мечта», «Малыш», «Солнышко» ача сачĕсенче те ку енĕпе сахал мар ĕç туса ирттереççĕ.

«Путене» ача садĕнче пĕчĕккисен пĕлӳ енне туртăнас йĕркелеççĕ.

Çулленех сентябрь уйăхĕнче шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче ĕçлекенсен кунне паллă тăваççĕ. Кăçал сентябрĕн 27-мĕшĕнче педагогсем валли «Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен 2007 çулхи чи лайăх ертӳçи» конкурс иртет.

Шкул çулне çитмен ачасем валли интеллектуаллă вăйăсем тăтăшах ирттереççĕ. Вĕсене вĕрентӳ округĕсем тăрăх йĕркеленĕ. Вăйăсем ачасене питĕ килĕшеççĕ.

2007 çулхи апрель уйăхĕнче районта «Çулталăк воспитателĕ» конкурс пулчĕ. Итогсене пĕтĕмлетнĕ хыççăн «Солнышко» ача сачĕн воспитателĕ О.В. Прокопьева çĕнтерни палăрчĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсем учрежденисен территорийĕсене проектлассипе республика конкурсне («Малыш», «Мечта», «Путене»), Швеци писателĕ Астрид Лингрен юбилейĕ ячĕпе ирттернĕ Пĕтĕм Раççей конкурсне («Солнышко», «Малыш», «Мечта», «Путене»), ЧР Президенчĕн парнине тивĕçессишĕн ирттернĕ республика конкурсне («Солнышко», «Мечта», «Путене», «Колокольчик», «Золушка»), «Сывлăх патне ача садне» республика конкурсне («Золушка», «Мечта», «Солнышко»), грантсен конкурсне тата «Светофорик» республика конкурсне хутшăнчĕç.

Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсем хăйсен ĕçне комплекслă тата парциаллă программăсемпе йĕркелесе пыраççĕ. Комплекслă программăран педагогсем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕнче ача садĕнчи воспитанипе вĕрентĕвĕн тата аталанăвăн çĕнĕ мелĕсемпе усă курма тытăнчĕç.

Мăн Сĕнтĕрти «Мечта» ача сачĕн воспитателĕ А.А. Яковлева черетлĕ заняти ирттерет.

«Колокольчик», «Золушка», «Мечта», «Солнышко» ача сачĕсенче ачасене ритмикăна, акăлчан чĕлхине, ӳкерме вĕрентессипе, шкула кайма хатĕрлессипе тӳлевлĕ курссем йĕркеленĕ. Кунпа пĕрлех учрежденисенче кружоксем тӳлевсĕр ĕçлеççĕ. Ку тĕллевпе педагогсемпе семинар занятийĕсем йĕркеленĕ.

Шел пулин те, учрежденисенчи кивелнĕ сĕтел-пукансене, ытти хатĕрсене çĕнетсе пырассипе йывăрлăхсем пур-ха. Пурин валли укçа-тенкĕ çитсе пымасть. Методика кабинечĕсене те çĕнетмелле. Сĕтел-пукансене çĕнетессипе вара «Малыш» аса сачĕ тата Калайкассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕ тăрăшрĕç. «Солнышко» ача садĕнче музыка залĕнче ачасен пуканĕсене çĕнетнĕ.

Ăнăçлăх ертӳçĕрен те нумай килет. Шкул çулне çитмен ачасене пĕлӳ парассин пахалăхне ӳстерессипе Муркашри учрежденисен ертӳçисене, Г.А. Шолкована (Мăн Сĕнтĕр, «Мечта»), М.А. Воробьевана (Патаккасси, «Золушка»), И.В. Ферапонтована (Муркаш, «Путене»), К.П. Маркована («Солнышко»), М.В. Иванована (Отарккă, «Малыш») ырă енчен палăртмалла. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсем хушшинче 1-мĕш вырăна «Мечта», 2-мĕш вырăна «Путене», 3-мĕш вырăна «Золушка» йышăнчĕç.

Малашлăх тĕллевĕсем те пĕчĕк мар. Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен ĕçне-хĕлне лайăхлатас тĕллевпе 2007 – 2008 вĕренӳ çулĕнче çак ĕçсене туса ирттерме пăхнă:

– учрежденисенче ачасене апатлантарассине лайăхлатмалла;

– шкула кайичченхи вĕрентĕвĕн çĕнĕ формисемпе анлăрах усă курмалла;

– ытларах ачасене шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене çӳреме явăçтармалла;

– воспитанипе вĕрентӳ процесĕн пахалăхне ӳстермелле тата вĕрентӳпе сывлăх сыхлавĕн услугисен сферине анлăлатмалла;

– учрежденисен пурлăхпа техника базине лайăхлатмалла.

Манăн çавна шанас килет. Вăхăт иртнĕ май районта хăйсен ӳсĕм шайне кура кашни ача шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденине çӳреме тытăнĕ, унта вара вĕсем валли пур условисем те пулĕç. Кунпа пĕрлех ачасене шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене вырнаçтарассипе те йывăрлăхсем пулмĕç.

Орининти «Золушка» ача сачĕн воспитанникĕсем аваллăх йăли-йĕркипе паллашаççĕ.

Май килнипе усă курса вара шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче вăй хуракансене, педагогсемпе воспитательсене хăйсен професси уявĕпе саламлатăп, çăмăл мар ĕçĕсенче ăнăçусем, ырлăх-сывлăх сунатăп.

В. РОМАНОВА,
район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн методисчĕ.

"Радиохум – хаçат страницинче. Халăх тата влаç: тĕллевсем пĕр пек, ĕçсем те пĕрле"

Нумайăшне татнă, çивĕч ыйтусем татах пур-ха

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

– Лилия Юрьевна, пĕрмаях контроллесе тăмалли ыйтусем пур тесе палăртрăр калаçура. Çавсем çинче чарăнса тăрсан та аван пулмалла.

– Кунта чи малтанах ял тăрăхĕсен территорийĕсенче тирпейилем тăвас ыйтăва кĕртес килет. Ку ыйтăва вырăнçенче куçран вĕçертмелле мар. Йĕркене пăсаксенне вара административлă майпа явап тыттарма май пуррине те манмалла мар. Çавăн пекех килсенче спирт пур шĕвеке сутаксемпе, преступлени тăвакансемпе кĕрешесси те, ăнăççăр çемьесемпе ĕçлесси те ял тăрăхĕсенче куллен пурнăçламалли ĕçсем пулса тăраççĕ. Çулсене йĕркеллĕ тытса тăрасси те çак ыйтусен йышнех кĕрет.

– Çитес çула каçакан ыйтусем. Вĕсем хăшĕсем?

– Кунта ĕнтĕ çулсем тăвасси кĕрет. Çавăн пекех – çĕнĕ урамсене электричество кĕртесси, кĕперсемпе каçмалли вырăнсене юсасси, шыв ыйтăвĕсене тивĕçтересси.

– Вырма вăхăтĕнче ирттернĕ тĕл пулусенче малтан çĕкленĕ ыйтусене çĕнĕрен хускатнă тĕслĕхсем пулчĕç-и?

– Ун пеккисем те пулчĕç. Йӳçкасси ял тăрăхĕнче, тĕслĕхрен, уйрăм çынсене валли çурт-йĕр çавăрма çĕр лаптăкĕсем уйăрнине çирĕплетесси çаплах татăлман. Турай шкулĕнче шыв ыйтăвне çĕнĕрен çĕклерĕç. Муркашпа Малиновка хушшинчи çула тĕплĕ юсасси те, плотинасемпе кĕперсене юсасси те унтах кĕрет. Кораккассинчи канализаци системипе каяш шыв пуçтарăнакан вырăн шăпине татса парасси, кунти подстанция Çурçĕрти электричество сетьне куçарасси, Москакассипе Вăрманкас Хачăкра шывпа тивĕçтересси те, вĕсене çĕнĕрен хускатрĕç пулсан, татса памах хистеççĕ. Хальхинче те Чапаев тата Чкалов ячĕллĕ хуçалăхсене пĕрлештерес ыйтăва кун йĕркиннчен кăлармарĕç ку тăрăхра пурăнакансем. Нискассинчи 5 хутлă çуртра та шыв проблеми татăлсах пĕтмен иккен-ха. Кунти шкулăн шыв башнинчен шывпа усă кураксем те шкулпа килĕшӳ туман халĕ те. Выççăлккă Хуракассинче çăл тăвас ыйтăва та çĕнĕрен хускатрĕç. Тĕрĕссипе кунта ĕç пуçланнă: çăл валли тимĕр ункăсем туяннă. Çатракасси ял тăрăхĕнче фельдшерпа акушер пунктĕнче фельдшер çук, выççăлккă Хуракассинче Быков урамне шыв пăрăхĕ кĕртес ыйтусене çĕклерĕç. Çавăн пекех хальхинче те, хĕлле хускатнă пекех, тавăрса памалла мар субсиди илекенсене контроллесе тăмаллине палăртаççĕ. Çакăн сăлтавĕ те пур. Патшалăх пулăшăвне илнĕ хыççăн хуçалăхра вăй хуракансенчен ĕç пăрахнă тĕслĕхсем те пур иккен.

– Субсидисем тенĕрен, социаллă ыйтусем тĕл пулусен икĕ тапхăрĕнче те йышлă пулчĕç пулĕ-ха?

– Ку чăннипех те çаплах. Ачапăча пособийĕсене, килти хушма хуçалăха аталантарма паракан кредита илес йĕрке пирки пур çĕрте те тĕплĕн ăнлантарнă. Çавăн пекех "Ĕç ветеранĕ" ята илесси мĕнрен килни пирки те. Çĕре харпăрлăха куçарас, ытти нумай-нумай ыйтусем çине тĕплĕ хуравсем панă.

– Мĕнех, тавах калаçушăн, Лилия Юрьевна. Çитес вăхăтра пурнăçламалли ыйтусен шăпи мĕнле татăлни кăçал каярахпа иртекен ял тăрăхĕсен кунĕсенче те палăрĕ.

Л. ПАВЛОВА
калаçнă.